26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
21
ШАМАТКУН
167(6404) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАСАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем БРЯНСК енче çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла йышăнса илнĕ.

ХАРЬКОВ енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене çĕнтерсе, çаплах малалла тапăнса пынă, уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн çарсем çапăçса разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Августăн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 89 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, тăшманăн 95 самолетне ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Брянск енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Пĕр соединенин боецĕсем, нимĕçсем хаяррăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, халăх пурăнакан 10 пункта йышăнса илнĕ, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çын таран пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн çарсем тăшмана çирĕплетнĕ позицисенчен хĕссе кăларнă та нимĕçсен тĕреклетнĕ пункчĕсене чылайĕшне йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман виллисем нумай выртса юлнă. 2 артиллери батарейине, минометсен 3 батарейине, 19 пулемет тата 14 автомашина пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Дмитровск-Орловский хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр часть юханшыв урлă каçнă та, хаяррăн çапăçса, тăшманăн хирĕç тăмалли узелне илнĕ, нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине тата унăн контратакисене сирсе ярса, çаплах малалла тапăнса пынă.

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ. Тăшман темиçе хут та контратакăна, анчах ăна пысăк çухатусем кÿнĕ, вара унăн каялла чакмалла пулнă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 1.500 салтакне офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 30 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Трофейăсем тытса илнĕ, вăл тупă 12 танк пур.

Харьковран хĕвеланăçнерехре пĕр участокра пирĕн стрелковăй подразделенисем тăшман танкĕсен тата автоматчикĕсен контратакисене сирсе янă. Пирĕн боецсем гранатăсемпе, танксене пемелли пăшалсемпе персе, нимĕçсен 11 танкне пĕтерсе тăкнă, 100 гитлеровеца вĕлернĕ. Тепĕр участокра тăшманăн 10 танкĕпе бронемашини унччен çес пирĕн пĕр часть йышăнса илнĕ пункта çĕмĕрсе кĕнĕ. Шевцов юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллери батарейи, нимĕçсене тĕл персе, вĕсен 6 танкне тата пĕр бронемашинине пĕтерсе тăкнă. Тăшман контратаки путланса ларнă. Старши лейтенант Солодовников командир пулса ертсе пыракан автоматчиксен ушкăнĕ çĕрле нимĕçсен атака тума хатĕрленекен танкĕсем патне курăнмасăр пырса çитнĕ. Автоматчиксем гранатăсем вăркăнтарма тытăннă, тăшманăн 3 танкне çунтарса янă. Нимĕç танкисчĕсем хăраса ÿкнĕ, вĕсен хушшинче паника пуçланса кайнă. Пирĕн боецсем автоматсемпе персе гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă та вĕсен юсавлă 9 танкне тытса илнĕ.

Харьковран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем Змиев хулине йышăнса илнĕ хыççăн çаплах малалла куçса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ, 800 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Пĕр пунктра нимĕçсем контратака пуçласа янă, анчах та пирĕн боецсем вĕсенне 2 танкне тата «Фердинанд» йышши хăй тĕллĕн çÿрекен 2 туппине пĕтерсе тăкнă, вара нимĕçсен каялла чакмалла пулнă.

* * *

Спас-Деменск хулинчен кăнтăр-хĕвелнăçнерехре пĕр соединени часĕсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă та, малалла куçса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерне, 7 туппине, 15 пулеметне тата 9 минометне пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра танксене пемелли тупăсен взводĕнчи артиллеристсем, çĕнĕ позицисенче тăнă чухне, персе, нимĕçсен 2 танкне çĕмĕрсе тăкнă тата 30 автоматчика вĕлернĕ.

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем 118 гитлеровеца вĕлернĕ. Артиллеристсем тата минометсем нимĕçсен 17 дзотне 14 блиндажне ишсе антарнă, 2 танк, 11 тупă, минометсен 13 батарейине, 25 пулемет тата боеприпассен 3 складне пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра разведчиксен ушкăнĕ, Полутин старшина командир пулса ертсе пынипе, белофиннсен тăшман вырăнне кĕрсе кайнă та штык вĕççĕн пулса иртнĕ тытăçура тăшманăн 10 салтакне вĕлернĕ. Разведчиксем тăшманăн 2 пулеметне пĕтерсе тăкнă, 2 дзотпа пĕр землянкине сирпĕнтерсе янă. Трофейăсем тытса илнĕ, вара каялла хăйсен часĕсене тĕрĕс-тĕкел таврăннă.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пĕр чăрăк снайперсем 5 кун хушшинче нимĕçсен 119 салтакне офицерне вĕлернĕ. Шатерников снайпер 18 гитлеровеца вĕлернĕ, Нерюсан, Штраух, Юнакиев снайперсем кашни 8 шар гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Станислав облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ халăх пурăнакан пысăк пунктра вырнаçса тăнă нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. 125 гитлеровеца, вăл шутра 3 офицера, вĕлернĕ. Унсăр пуçне, партизансем чугун çул çинче 3 кĕпере, шоссе çулĕ çинче 4 кĕпере сирпĕнтерсе янă, боеприпассем турттарса пыракан нимĕç автомашинисен колоннине пĕтерсе тăкнă тата 3 километр тăршшĕнче телефонпа телеграф çыхăнăвĕн линине пăснă. Молдаван партизанĕсем çак юлашки кунсенче минăсем лартса тăшманăн 6 грузовой автомашинине пĕтерсе тăкнă, шоссе çулĕ çинчи 2 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсемпе румынсен 25 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 4-мĕш танковăй армийĕнчи 3-мĕш минометнăй дивизион штабĕн тыткăна лекнĕ начальникĕ капитан Иоахим Шпейдер çапла каласа панă: «Июль уйăхĕн пуçламăшĕнче 4-мĕш танковăй çар штабĕнчи офицерсем питĕ хавас çÿретчĕç. Офицерсем нимĕç çарĕсем çулла наступлени тума хатĕрленни çинчен пĕлетчĕç, наступлени ăнăçуллă пуласси шанатчĕç. Эпир Курск пĕкки районĕнче тăракан вырăс çарĕсене çавăрса илсе вĕсене кĕске вăхăт хушшинчех пĕтерсе тăкма пулĕ тесе шутлаттăмăр. Июлĕн 4-мĕшĕнче Гитлер приказне илнĕ хыççăн офицерсем хăйсем хушшинче çапла калаçатчĕç: «Акă часах вырăссене Сталинградшăн тавăратпăр ĕнтĕ», тетчĕç. Анчах та наступлени пуçласа янă малтанхи кунсенчех пире питĕ пысăк шухăшра ячĕç. Нимĕç хĕçпăшалĕ те пирĕн малта такăнчĕ. «Июльти инкек» хыççăн (июльти ăнман наступлени хыççăн пирĕн çапла ят пачĕç) офицерсен нумайăшĕн шухăш-кăмăлĕсем улшăнчĕç. Нумайăшĕ пулмасть эпир нимĕç çарĕсем çулла çапăçса хирĕçне хуса кайма пултараймасан текен ăнланма шанатчĕç. Анчах халĕ пирĕн пĕтĕм çарăн пĕр сутăн çыннисем те Германи çарĕ çапăçусене çĕнтерейменнине ăнланаççĕ. Германи пĕтĕмпех катастрофа патне çывхарса пырать».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем июль уйăхĕнче Минск облаçĕнчи Логойски районĕнче нумай ялсене çаратса, пĕтерсе тăкнă. Çав районăн пĕр лагерĕнче 625 мирлĕ граждансене тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Чурасемпе сутăçăсене Германие 2000 çынна тытса Германи каторгине хăваласа кайнă. Вăрă-хурахсем 415 пÿрт, 405 хуралтă çунтарса янă, хресченсене тимĕн юлмичен çаратса çап-çарамас тăрса хăварнă.

Пирĕн авиаци Брянскпа Рославль чугун çул узелĕсене, тăшманăн аэродромĕсемпе пĕр çĕре пуханса тăнă войсксене тапăннă

Августăн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Брянскпа Рославль чугун çул узелĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Совет летчикĕсем тăшман эшелонĕсемпе çар склачĕсем çине фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем питĕ нумай пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем тухнă, чугун çулсем çинче пуханса тăнă эшелонсене вут хыпса илнĕ. Брянск чугун çул узелĕнче пиллĕ вăйлă, 6 взрыв пулнă.

Çав кас пирĕн авиаци нимĕçсен самолечĕсем йышлăн тăнă аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă. Тăшманăн темиçе вунă самолетне пĕтерсе тăкнă е çĕмĕрнĕ.

Çавăн пекех пирĕн самолетсем Харьковран кăнтăртарахра тата хĕвеланăçнерехре пуханса тăнă тăшман çарĕсемпе техникине пăра-пăра çапнă тата эшелонсем тăнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

КОЛХОЗА ПУЛĂШАТПĂР

Эпир, Хусан чугун çулĕн 17-мĕш дистанцийĕнче ĕçлекенсем, хамăр бригадăн участокĕнчи чугун çула ялан лайăх пăхса усратпăр. Нумай пулмасть çула пахалăхне тĕрĕслесе пăхнă. Çак пирĕн бригада пĕрремĕш вырăна тухнине палăртрĕç. Бригадăра Александрова, Алексеева, Яндушкина, Яковлева тата Кушаева юлташсем пĕрмаях стахановла ĕçлесе пыраççĕ.

Хамăр ĕçе лайăх туса пынă вăхăтрах эпир канмалли кунсенче тырпулсене пуçтарса кĕртме пулăшатпăр. «Коминтерн» колхоза 5 гектар утă çулса тата гектар çурă тырă вырса патăмăр. Çаканшăн пире колхозниксем тав тăваççĕ.

Эпир колхоза малашне те пĕрмаях пулăшса пыма шутлатпăр.

Бригадир С. ТАРАСОВ.

„За оборону Сталинграда" медаль илчĕç

Пĕр чăрăк гварди полковникĕ Борисенко юлташ çак кунсенче Сталинград хулин защитникĕсене «За оборону Сталинграда» медальсем парса наградăларĕ. Медаль илнисенчен 22-шĕ — орденлă чăваш республикин ывăлĕсем. Етĕрне районĕнчи Мăн-Сĕнтĕр ялĕнчен килнĕ гварди старши сержанчĕ Василий Толстов юлташ награда илнĕ ятпа сăмах каларĕ:

— Эпир Сталинградшăн паттăррăн çапăçрăмăр. Правительствăн çак пысăк наградин пире татах та паттăррăн çапăçма хушать. Эпир ку наградăна çине ĕçпе ответлĕпĕр. Орденлă Чăваш республикин ятне ямăпăр,— терĕ вăл.

Г. МЫТИКОВ.

Кашни колхозник нормăна тултарать

ВАРМАР. Çĕнĕ Мăнтăрти «Красные Шептахи» колхоз членĕсем Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕç. Колхозниксем, вăрнарсен пуçарăвне ырласа, икĕ кун хушшинче тырă вырса пĕтерме, 5 кунтан кая юлмасăр кĕлтесене капана хывса çитерме, кĕракине августăн 19-мĕшĕнче вĕçлеме, государствăна тырă парассине пур культурăсем енĕпе те августăн 25-мĕшĕнче тултарма сăмах пачĕç.

Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Колхозра ĕç нормине тултарман колхозниксем пачах çук.

В. ВЕСЕЛОВ.

Кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ

ЙĔПРЕÇ. Шуркассинчи «Строитель» колхоз членĕсем М. Владимировпа М. Прокопьева юлташсем ватă пулин те ĕçре паха пример кăтартаççĕ. Владимиров юлташ 64 çула çитнĕ. Кăçал вăл июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне 105 ĕçкунĕ ытла тунă. Прокопьева юлташ 60 çулта. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăл 160 ĕçкунĕ тунă. Халĕ вĕсем уборкăра кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ЛАЙĂХРАХ ĔÇЛЕМЕ ПУЛТАРАТЬ ТАТА ĔÇЛЕМЕЛЛЕ ТЕ

ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔН СЕКРЕТАРĔ И. М. ЧАРЫКОВ ЮЛТАШ РЕСПУБЛИКĂРИ ПАРТАКТИВ ПУХĂВĔНЧЕ ТУНĂ ДОКЛАДРАН

Республикăри нумай предприятисем хăйсен ĕçне вăрçă ыйтнă пек вăхăтра çĕнетсе урăхлатрĕç. Фашистла захватчиксене Совет çĕрĕ çинчен хăвăртрах хăваласа кăларас ĕмĕтпе çунса, тылри ĕççыннисем хăйсен вăйне шеллемесĕр, вăхăта шута илмесĕр, икĕ хут тата виçĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлеççĕ.

Чăваш республикинчи малта пыракан предприятисем фронта пулăшас ĕçре пысăк çитĕнÿсем турĕç. 1942 çулта тĕп предприятисем государство панă заданисене ирттерсе тултарчĕç. Малта пыракансем хушшинче куçса килнĕ предприятисем те сахал мар, вĕсем çĕнĕ производствăна ăнăçлăн алла илчĕç. Вăрçă вăхăтĕнче урăхлатса йĕркеленĕ е çĕнĕрен хута янă предприятисем те начар мар ĕçлерĕç.

1942 çулти плана çаксем тултараймарĕç: Наркомместпром, строй-материалсен промышленноçĕн управленийĕ, вырăнти топливо промышленность управленийĕ, Наркомлесăн вăрман каскалакан завочĕсем, пулă тресчĕ, «Большевик» завод, Шупашкарти тир сăран комбиначĕ. Иртнĕ çулта кооператци промышленноçĕ те пачах çителĕксĕр ĕçлерĕ.

Кăçалхи пĕррмĕш çурçулта пирĕн малта пыракан предприятисем 1942 çулта тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе, малалла ÿсĕмсем турĕç. Промышленность наркомачĕсемпе Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем, пĕтĕмпе илсен, çурçул планне ирттерсе тултарчĕç. Союз промышленноçĕн предприятийĕсем чи лайăх результатсем кăтартрĕç. Район промышленноçĕ те çурçулти задание чылай ирттерсе тултарчĕ.

Малтанхи çурçул планне Якунин тата Челноков юлташсем главнăй инженер пулса тăракан заводсем, Улатăрти паровозсем юсакан, Канашри вагонсем юсакан заводсем, Шупашкарти тата Улатăрти табак фабрикисем, Вăрмарти спортинвентарь фабрики тата ыттисем те уйрăмах ăнăçлăн тултарчĕç.

Çакна та палăртмалла: иртнĕ çулта уйăхран уйăхах юлса пыракан чылай отраслĕсемпе предприятисем те кăçалхи малтанхи çурçулта хăйсен ĕçне нумай лайăхлатрĕç. Сăмахран, Наркомместпром çурçул планне 120 процент, кооператци промышленноçĕ 108 процент тултарчĕç. Иртнĕ çулта промысла коопераципе инвалидсен кооперацийĕн 5 союзĕнчен пĕри те плана тултарайман пулсан, вĕсем кăçал пурте плана тултарса пыраççĕ.

Иртнĕ çулта чăтма çук юлса пынă «Большевик» завод кăçал республикăри малта пыракан предприятисен ретне тăчĕ. Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче завод пĕрре кăна мар малти вырăна йышăнчĕ.

Малта пыракан предприятисем çак çитĕнÿсене мĕнле тума пултарнă-ха?

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод уйăхран уйăхах плана ирттерсе тултарать тата продукци кăларассине ÿстерет. Çурçул планне майăн 25-мĕшĕ тĕлне тултарнă. Февраль, март тата апрель уйăхĕсенче завода ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Май уйăхĕнчен пуçласа хальхи вăхăта çитиччен завод Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ ялавне тытса тăрать.

Çакăн пек çитĕнÿсем тăвас тесе, завод коллективĕн питĕ вăйлăн ĕçлемелле пулчĕ. Завод республикăна 1941 çулти кĕркунне куçса килнĕ. Çĕршывпа фронт умĕнчи ответлăха туйса, завод коллективĕ хăйне панă çуртсенче оборудованисем вырнаçтарас ĕçе тимлĕн туса ирттерчĕ, вĕсене кĕске вăхăтрах вырнаçтарса лартрĕ, инструментсемпе приспособленисем нумай туса хатĕрлерĕ. Йывăрлăхсем нумай пулнă. Завод работникĕсем вĕсене çĕнтерчĕç, вара 1942 çул пуçламăшĕнче завод çĕршыва хÿтĕлеме кирлĕ паха продукцие пама пуçларĕ.

Кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттернĕ. Рабочисен 80 процентне заводра вĕрентсе хатĕрленĕ.

Çĕнĕ тĕслĕ вуншар продукцие вĕренсе алла илсе, вĕсене нумайăн кăларса тăма тытăннă. Заводра электроэнергие перекетлес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ.

Çак çитĕнÿсене тунă çĕрте партиллĕ-организациллĕ, партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăх туса пыни пысăк вырăн йышăнать. Парти организацийĕ социализмлă ăмăртăва куллен ертсе пырать. Коммунистсем хăйсен примерĕпе стахановла ĕçĕн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ. Сăмахран, Маковская юлташ задание уйăхран уйăхах 300—400 процент, Мореплавцева, Дмитренко юлташсем 300 процент ытла тултарса пыраççĕ. Кун пек примерсем сахал мар.

Парти организацийĕ комсомол организацине пысăк пулăшу парать, çакна пула комсомол организацийĕ çамрăксене вĕрентсе пырас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Комсомолецсен фронтовой бригадисене нумай организациленĕ, вĕсем пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартса ĕçлеççĕ.

Рабочисемпе инженерла-техникла работниксен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе заводра çине тăрса ĕçлеççĕ. Рабочисене пахча-çимĕç лартма пулăшас, пĕрлешсе апатланассине организацилес енĕпе сахал мар ĕçсем туса ирттернĕ.

Малта пыракансене хисепленипе тата мухтанипе пĕрлех, пирĕн юлса пыракан отраслĕсемпе предприятисем çинчен те манас пулмасть. Питĕ шел, анчах пирĕн республикăра юлса пыракан отрасельсем, трестсем, предприятисем, промартельсем пур-ха. Наркомлес, Наркомхоз, полиграфи промышленность управленийĕ, вырăнти топливо промышленность управленийĕ, строиматериалсен промышленность управленийĕ, Сĕнтĕрвăррипе Етĕрнери спиртзаводсем, Милютинри мехлесопункт тата ыттисем те çурçул планне тултараймарĕç. Çак наркоматсен, управленисен, предприятисен руководителĕсемпе коллективĕсем тăван çĕршывпа фронт умĕнче пысăк парăмра тăраççĕ. Вĕсем вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма чăннипех вĕренсе çитеймен-ха. Ĕçре йывăрлăхсем тĕл пулнине пирĕнтен кашниех пĕлет. Анчах большевиксем вăл йывăрлăхсенчен хăрамаççĕ. Сталин юлташ çапла каланă: «Йывăрлăхсем пулĕç. Анчах эпир вĕсенчен хăрамастпăр, мĕншĕн тесен эпир—революци вут-çулăмĕнче пиçĕхнĕ большевиксем. Йывăрлăхсем пулĕç, анчах эпир вĕсене, халиччен çĕнтерсе пынă пекех, çĕнтерĕпĕр, мĕншĕн тесен эпир—Ленинăн хурçă пек çирĕп партийĕ йывăрлăхсемпе кĕрешме тата çĕнтерме,—хăйкăшма тата йĕрме мар,—тупта са хатĕрленĕ большевиксем пулса тăратпăр».

Йывăрлăхсене çĕнтерес тесен партипе хуçалăх руководителĕн пуçарулă пулмалла, большевикла тимлĕхпе çине тăрса ĕçлемелле, хамăр умра тăракан задачăсене татса пама пĕлмелле.

Çÿлте асăннă предприятисем вырăнти чĕртаварпа тата вырăнти топливăпа ĕçлеççĕ. Наркомлесăн, вырăнти топливо промышленность управленийĕн, Милютинри мехлесопункттăн, стройматериалсен промышленность управленийĕн чĕртавар ресурсĕсем калама та çук нумай. Оборудованипе инструментсем тата ытти хатĕрсем вĕсен çителĕклех. Çапла ĕнтĕ, вĕсем çителĕксĕр ĕçлени руководительсем çавăрăнăçусăр пулнинчен, вĕсем рабочисемпе инженерсене, техниксемпе служащисене йывăрлăхсемпе кĕрешмешкĕн тата çĕнтермешкĕн мобилизацилеме пĕлменнинчен, çирĕп дисциплина пулманнинчен кăна килнĕ.

Наркоматсемпе предприятисен çав руководителĕсен çулталăк планне тултарас тата ирттерсе тултарас тĕлĕшпе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Пирĕн предприятисенче производствăна малалла аталантарса пырасси нумай тĕлĕшпе вĕсене электроэнерги лайăх парса тăннинчен килет. Чылай предприятисене халĕ электроэнерги çителĕклĕ таранах парса тăраймаççĕ-ха. Электроэнерги çителĕклĕ пулман пирки, хăшпĕр предприятисен оборудованийĕсемпе халлĕхе начар усă кураççĕ-ха.

Электростанци çителĕксĕр ĕçлени Шупашкар хулинчи нумай предприятисен ĕçĕнче чăрмав кÿрет. Паллах, Шупашкарти электростанци хула электроэнерги ыйтнине пĕтĕмĕшпех тивĕçтерме пултараймасть. Анчах вăл хăйĕн хăвачĕпе начар усă курать-ха. Кăçалхи ултă уйăх хушшинче станци, планра палăртнипе танлаштарсан, 1.373 пин киловатт-сехет электроэнерги парса çитерей мерĕ. Сăлтавĕ—халĕ пур машинăсемпе тĕрĕс усă курманнинче, тĕрлĕ ремонтсен графикне пăснинче, ремонт пахалăхĕ начаррине, заводсем электроэнерги расходламалли лимита пăснинче пулать.

Машинăсене юсас тата запаслă пайсем туса хатĕрлес тĕлĕшпе электростанцие пысăк пулăшу панă. Кунта квалификациллĕ рабочисем ярса панă. Анчах электростанци çавçавах пачах çителĕксĕр ĕçлет. Электростанци руководителĕсен вĕсене паракан пулăшупа вăхăтра тата пĕтĕмĕшпех усă курмалла.

Çĕршывпа фронт интересĕсем энергетика мощноçĕсемпе май пур таранах туллин усă курма хушаççĕ. Çавăнпа та Водосвет директорĕ Варфоломеев, Наркомхоз Сорокин юлташсен электростанцие пĕр чарăнусăр ĕçлеттерес тĕлĕшпе мĕн май пуррине пĕтĕмпех тумалла. ВКП(б) Шупашкар горкомĕн станци ĕçне контроль туса тăрассине вăйлатмалла, кирлĕ пулăшăва вăхăтра памалла тата электростанци ĕçне тĕплĕн пĕлсе тăмалла.

Шупашкар хулинчи хальхи предприятисемпе çĕнĕрен тăвакан предприятисене вăйлатса пырас ĕçре Атăл лешьенчи электростанцие туса лартни питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çĕнĕ электростанцие хăвăрт ĕçе ярассишĕн кĕрешесси республикăри партипе совет тата хуçалăх организацисен чи пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать.

Райсоветсен хăшпĕр исполкомĕсем, хăшпĕр предприятисемпе стройкăсен руководителĕсем Атăл лешьенчи электростанци строительствине рабочисем çителĕксĕр ярса параççĕ. Уйрăмăнах Хĕрлĕ Чутай районĕ калама çук юлса пырать.

Çакна тÿссе тăма юрамасть. Строительствăра палăртнă ĕçсене вăхăтра туса ситерес тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те тăвас пулать.

Çавăн пекех тата Атăл лешьенчи торфопредприятире торф кăларас ĕçе питĕ хытă вăйлатса ямалла. Атăл лешьенчи торфопредприяти çĕнĕ электростанцие топливо парса тăракан тĕп предприяти пулса тăрать.

1943 çулăн пĕрремĕш çур çулĕнче чугун çул транспорчĕпе шыв транспорчĕ çинчи чылай коллективсем пысăк çитĕнÿсем турĕç. Канаш станцийĕ çурçул хушшинче вагонсем тиемелли плана 114 процент, Шупашкар станцийĕ—310 процент, Улатăр станцийĕ—261 процент пурнăçланă. Вагонсем тиемелли плана çулйĕр службин Улатăрти отделенийĕ 113 процент тултарнă. Вагонсем тиемелли плана Йĕпреç, Вăрнар, Ăлтышево станцийĕсем т. ыт. те ирттерсе тултарнă.

Госпароходствăн Сăрă шывĕ çинчи агентстви, çавăн пекех тата Шупашкартипе Куславккари пристаньсем те хăйсен планĕсене чылай ирттерсе тултараççĕ.

Çулйĕр службин Шупашкартипе Улатăрти дистанцийĕсем çулсене лайăхлатнă, лайăх тытса тăраççĕ.

Улатăрти депо коллективĕ юсавлă мар паровозсен процентне уйăхран уйăха чакарса пырать. Юсавлă мар паровозсен процентне Канаш станцийĕ те чакарнă.

Улатăрпа Канаш станцийĕсенче паровозсем пĕр талăк хушшинче каякан çула июль уйăхĕнче, июньрипе танлаштарсан, 10—15 километр ÿстернĕ. Техникăлла хăвăртлăха та ÿстереççĕ.

Анчах транспорт ĕçенче пысăк çитменлĕхсем те чылай. Вырăнти вагонсем пушă лармалли плана чылай станцисенче (Канаш, Улатăр, Вăрмар, Йĕпреç, Çĕмĕрле тата ытти станцисенче) пурнăçламаççĕ. Вагонсем час-часах плана кăтартнинчен икĕ хут ытларах пушă лараççĕ.

Улатăр отделенийĕнче поездсем çÿретмелли графика пурнăçламаççĕ. Çав графика пурнăçламаннин сăлтавĕ, пуринчен ытла, брак тата паровозсемпе усă курмалли правилăсене пăсни пулса тăрать. Кăçалхи 7 уйăх хушшинче Улатăр отделенийĕнче 155 хутчен брак пулнă. Станци работникĕсем çавăрăнăçусăр пулнă пирки 6 уйăх хушшинче поездсене семафор патĕнче 172 хутчен чарса тăнă. Паровозсене хăвăртрах çÿретессишĕн питĕ çителĕксĕр кĕрешеççĕ.

Транспортри оборона тĕлĕшпе питĕ паха резерв—ĕçĕн лунинла майĕсем пулса тăраççĕ. Лунинецсем паровоза, стрелкăна, вагона, станока тата ыттисене те питĕ тимлĕн пăхса асăрхаса тăраççĕ, вĕсен ĕçлес срокне тăсаççĕ, юсав ĕçĕн чылай пысăк

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Чăваш республикинчи промышленность лайăхрах ĕçлеме пултарать тата ĕçлемелле те

ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔН СЕКРЕТАРĔ И. М. ЧАРЫКОВ ЮЛТАШ РЕСПУБЛИКĂРИ ПАРТАКТИВ ПУХĂВĔНЧЕ ТУНĂ ДОКЛАДРАН

ЮЛАШКИ

пайне хăйсен вăйĕпе тăвассĕ. Лунинла движени, транспорт çинчи культурăна ÿстернисĕр пуçне, тата метала, йывăçа, топливăна нумай перекетлесе хăварма пулăшать, сахалтарах ĕç вăйĕпе усă курма май парать, çакă вăл вăрçă вăхăтĕнче питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Анчах та парти организацийĕсем, транспорт командирĕсем ĕçĕн лунинла майĕсене пурнăçа кĕртессишĕн начар кĕрешеççĕ. Канаш деповĕнче кăçал лунинла паровозсен хисепĕ икĕ хута яхăн чакнă. Паровоз бригадисен пиллĕкмĕш пайĕ кăна лунинла ĕçлет. Улатăр деповĕнче те ĕç çавăн пекех пырать. Тĕрĕссипе ĕçĕн лунинла майĕсем транспортра питĕ пысăк вырăн йышăнмалла.

Транспортниксен боевой задачи — хĕллехи условисенче ĕçлеме кăтартуллăн хатĕрленесси пулса тăрать. Хамăрăн шалти мĕнпур ресурссемпе усă курмалла. Железнодорожниксен транспорта хĕллехи йывăр условисенче тикĕс те пĕр чарăнмасăр ĕçлеттерме пĕтĕм вăйпа тăрăшмалла.

Чугунçул транспорчĕн ĕçне малалла лайăхлатасси—вăл пĕр транспортниксен ĕçĕ кăна мар пулса тăрать. Çакă вăл пĕтĕм парти, пĕтĕм государство ĕçĕ.

Пирĕн промышленноçпа транспортăн продукци туса кăларассине малалла ÿстерме чылай пысăк майсемпе резервсем пур. Анчах çав резервсемпе час-часах кирлĕ пек усă курмаççĕ. Чылай предприятисенче оборудованипе çителĕксĕр усă кураççĕ, чĕртавара, топливăна, ĕçре кирлĕ ытти материалсене ытлашши расходласа пĕтереççĕ, рабочисенчен пĕр пайĕ йышăннă нормăсене пурнăçласа пымасть. Технологи процесне пур çĕрте те мар çĕнетсе, лайăхлатса пыраççĕ. Нумай предприятисенче рационализацине изобретательствăна çителĕксĕр ĕçе кĕртеççĕ.

Оборудованипе япăх усă курнине кăтартса паракан примерсене сахал мар тупма пулать. Главнăй инженер пулса Якунин юлташ ĕçлекен завод пек малта пыракан предприятире те тĕрлĕ сăлтавсене пула оборудованисем чарăнса тăни пĕрремĕшпе иккĕмĕш кварталсенче пĕтĕм ĕçленĕ вăхăтăн 20 процентĕнчен те ытларах пулать. Тепĕр тĕслĕх: Чăвашмельтрестăн арманĕсем пĕрремĕш çурçулта 10 пин сехет ытла чарăнса тăнă, ĕçлессе вара пĕтĕмпе те 20 пин сехет кăна ĕçленĕ. Çакăн пек йĕркене, уйрăмах халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, тÿсме пулать-и-ха ĕнтĕ?

Халĕ, вăрçă кунĕсенче, перекетлĕх режимĕшĕн кĕрешесси уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Чĕртаварпа топливăна, энергие ытлашши расходласа пĕтерни предприятисен ĕçне çĕнĕ йывăрлăхсем кÿрет, вĕсен ĕç майĕсене ансăрлатать. Пурне те перекетлессишĕн кĕрешесси пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăма тивĕçлĕ. Çакна ăна кашни работникăн çирĕп пăхănса пымалла. Анчах хăшпĕр хозяйственниксемпе пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем çав питех те паха ĕçрен халĕ те аякра тăраççĕ-ха.

Сĕнтĕрвăрринчи спиртзавод пĕрремĕш çурçулта 116 пин тенкĕ ытла убыток кÿнĕ. Убыток вăл—топливăна ытлашши çунтарса янин, чĕртавара ытлашши расходласа пĕтернин, çавăн пекех тата вырăнсăр расходсем нумай кăларнин результачĕ пулса тăрать. Заводра простойсем нумай. Ĕçре хуçасăрлăхпа тирпейсĕрлĕх пуçпулса тăраççĕ. Анчах та çав фактсене коммунистсем сÿтсе явмаççĕ. Парти райкомĕ те вĕсене курмасăр иртсе каять.

Уйрăм предприятисенче брак тунипе кĕрешмеççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводра уйрăмах брак нумай тăваççĕ.

Промышленность продукцийĕ туса кăларассине ÿстермелли пĕрремĕш услови вăл—поточнăй производство организацилесси пулса тăрать. Производствăн поточнăй меслетне кирек мĕнле предприятире те йĕркелеме пулать. Производствăн поточнăй меслетне ĕçе механизацилессипе çыхăнтарса пырса организацилени производство циклне кĕскетме, производствăпа технологи процесне лайăхлатма, ĕçе тикĕслетме, продукци пахалăхне лайăхлатма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшать. Поточнăй меслет материалсен расходне пĕчĕклетме, оборудованисен, çавăн пекех тата ĕç вăйĕн пĕр пайне пушатма май парать.

Поточнăй производство организацилес тĕлĕшпе малтанхи утăмсене Канашри вагонсем юсакан заводра тата Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра кăна тунă ха.

Предприяти руководителĕсемпе парти организацийĕсем производствăна поточнăй меслет çине куçарни политика тĕлĕшпе мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине вĕсне çитиччен ăнланса илме тивĕçлĕ. Çак çĕнĕ те паха меслете мĕнпур предприятисенче хăюллăн та çине тăрса ĕçе кĕртсе пымалла.

Хальхи вăхăтра предприятисене хĕллехи условисенче ĕçлеме хатĕрлесси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Энергетика хуçалăхне, цехсен корпусĕсене, оборудованисене, культурăпа пурăнмалли çуртйĕрсене, çамрăксен общежитийĕсене хĕле вăхăтра хатĕрлесе çитерес пулать. Столовăйсемшĕн, овощехранилищесемпе продовольстви базисем хатĕрлесе хурассишĕн халех çине тăрса тăрăшмалла. Кирлĕ таран топливо запасне хатĕрлесе хумалла. Кашни предприятин хĕле пур енчен те хатĕрленсе кĕтсе илес пулать.

1942—43 çулсенчи хĕллехи условисенче ĕçленин опычĕ çакна кăтартса пачĕ: хĕле вăхăтра, тĕплĕн хатĕрленсе çитеймен предприятисем пысăк йывăрлăхсем тÿсрĕç. Куславкка комбинатĕнче ĕç çавăн пек пулчĕ. Унта вăхăтра вутă хатĕрлесе хуман. Комбинат, унта çĕршер лашапа кулленех вутă турттарса тăнă пулин те, хĕлĕпех пысăк йывăрлăхсем тÿсрĕ.

Хĕле хатĕрленесси çине сÿреккĕн çавăрăнса пăхни Канашри вагонсем юсакан заводăн, Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводăн ĕçĕсенче те палăрчĕ.

Çапах та иртнĕ çулхи йăнăшсене пур çĕрте те мар-ха шута илнĕ. Куславкка комбинатĕнче хĕлле кирлĕ пулакан вутăн виççĕмĕш пайне кăна хатĕрленĕ. Комбинат руководителĕсемпе Куславкка райсовет исполкомĕ рабочисем пурăнакан çуртсем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе те мерăсем йышăнман. Пурăнмалли çуртсемпе общежитисене нумай рабочисем хăйсен вăйĕсемпе юсама кăмăл тунă пулин те, кунта çак ĕçе халĕ те тытăнман-ха. Заводри профсоюз комитечĕ (председателĕ Франчук юлташ) рабочисен нушисемшĕн сахал тăрăшать. Цехсенче туса çитермен пысăк ĕçсем пур, вĕсем хĕлле ĕçе нумай йывăрлатма пултараççĕ.

Хĕле хатĕрленес ĕç Челноков юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводра, Канашри вагонсем юсакан заводра, Улатăрти паровозсем юсакан заводра, Сĕнтĕрвăрринчи райпромкомбинатра тата ытти çĕрте те çителĕксĕр пулса пырать.

ВКП(б) хула комитечĕсемпе райкомĕсен, пуçламĕш парторганизацисен, завод директорĕсен задачи—мĕнпур предприятисене хĕле кăтартуллăн хатĕрлесе çитересси пулса тăрать.

Вăрçă вăхăтĕнче предприятисене ĕçлеме çĕнĕ рабочисем нумай кĕчĕç. Вĕсем—çамрăк колхозниксем, килхуçи хĕрарăмĕсем тата ыт. те. Вĕсене чи кĕске сроксенче ăсталăха вĕренсе алла илме пулăшмалла, производство дисциплинине тата йĕркелĕхе хăнăхтармалла, хăйсен ĕçĕшĕн ответлă пулса тăма вĕрентмелле.

Чылай предприятисенче çак ĕç çине питех те тимлĕн çавăрăнса пăхрĕç. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра, сăмахран, вăрçă вăхăтĕнче квалификациллĕ кадрсене нумай йышлăн вĕрентсе хатĕрленĕ. Вĕрентсе хатĕрленĕ рабочисенчен çурри ытла — хĕрарăмсем. Вĕрентес ĕçе кунта техминимум курсĕсем урлă, стахановла шкулсем урлă туса пыраççĕ. Çамрăк рабочисене нумайĕшне опытлă производственниксем хăйсем çумне çирĕплетсе, вĕрентсе пыраççĕ. Сахал мар стахановецсем производство командирĕсен курсĕсенчен вĕренсе тухрĕç. Халĕ конструкторсемпе технологсене, мастерсене вĕрентсе хатĕрлеççĕ. Анлă программа тăрăх теори курсне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн, вĕренекенсем ултă уйăхлă практикăра пулаççĕ. Завода ертсе пыракансем пуçарнипе кунта каçхи техникум уçнă, вăл предприяти валли квалификациллĕ кадрсем хатĕрлет.

Кадрсем хатĕрлес ĕçе Челноков юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводра тата Çĕмĕрле комбинатĕнче начар мар организациленĕ.

Çамрăк кадрсене вĕрентсе, вĕсене кĕске срокрах нормăсене пурнăçа кĕртсе пыракан тумалла. Мĕнпур рабочисем нормăсене пурнăçа кĕртсе пыни промышленноçăн пур отраслĕсенче те продукци туса кăларассине калама çук вăйлăн ÿстерме пулăшать. Çакă вăл кашни сыншăн паллă пулма тивĕçлĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ мĕнпур рабочисене производство вĕренĕвне явăçтармалла, çĕнĕрен килнĕ рабочисене пурне те вĕрентсе, экзамен комиссийĕсем урлă обязательнăй йĕркепе специальноçсем тата разрядсем памалла тăвас пулать.

Тÿрех каламалла, кадрсене вĕрентсе политикăллă воспитани парас ĕçре пирĕн халĕ пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Çак енĕпе пирĕн хуçалăхпа парти руководителĕсем пурте мар-ха кирлĕ пек ĕçлеççĕ. Кадрсем хатĕрлес ĕçе, сăмахран, Канашри пир-авăр фабрикинче пачах та çителĕксĕр организациленĕ. Çав вăхăтрах кунта массăллă профессисем енĕпе çĕнĕрен 200 рабочие яхăн кирлĕ.

Кадрсем хатĕрлесси çине çакăн пек сÿреккĕн пăхнине пĕтермелле. Кашни предприятире рабочисене уйрăмшерĕн тата бригадăсенче вĕрентессине анлăн организацилемелле, стахановла шкулсен, ытти нумай тĕрлĕ техника кружокĕсен йышне сармалла. Çĕнĕ кадрсемпе ĕçлессине кирлĕ пек йĕркелени вăл—предприятисен ĕçне лайăхлатассине, продукцин хисепĕпе пахалăхне ÿстерессине пĕлтерет.

Вăрçă вăхăтĕнче государствăн ĕç резервĕсене хатĕрлесси уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăрçă кунĕсенче республикăри ФЗО шкулĕсем, чугунçул училищисем квалификациллĕ рабочисем пиншер сын вĕрентсе кăларчĕç. Анчах пирĕн шкулсемпе училищĕсен ĕçĕнче йĕркесĕрлĕхсем нумай-ха. Хăшпĕр шкулсенчи вĕренекенсене ĕç вырăнĕсем, инструментсем пурне те мар уйăрса панă, теориллĕ занятисем валли кабинетсем пур çĕрте те мар туса йĕркеленĕ.

ФЗО шкулĕсем начар ĕçленин сăлтавĕсенчен пĕри вăл—шкулсемпе училищĕсене вĕренме илес (мобилизацилес) ĕçе организованно туса ирттерменни пулса тăрать. Ялан тенĕ пекех шкулсене вĕренме вĕренÿ пынă вăхăтра тăршшĕпех илсе тăраççĕ, çакна пула вĕренекенсем пĕрмаях улшăнса тăраççĕ, çакна пулах вĕренÿ йĕрки пăсăлать.

Çак мĕнпур фактсем ĕç резервĕсен республикăри управленийĕ çителĕксĕр ĕçлени çинчен кăна мар калаççĕ. Çаксем вĕсем партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем, хуçалăх руководителĕсем квалификациллĕ рабочисене вĕрентсе хатĕрлес ĕç вăрçă вăхăтĕнчи чи паха задача пулса тăнине кирлĕ пек ăнланса илменни çинчен калаççĕ.

Граждăн вăрçин чи йывăр вăхăтĕнче, выçă та сивĕ пулнă 1919 çулта, Ленин çапла çырнă: «Тырпулăн кашни пăтне тупса валеçнĕ чухне кăтартуллă тимлĕхлĕ тата тÿрĕ кăмăллă пуласси, столовăйсене кăтартуллăн тытса усрасси, пĕр-пĕр рабочи çуртне, пĕр-пĕр квартала кăтартуллăн таса тытасси,—çаксем çине пичетĕн те, çавăн пекех тата рабочисемпе хресченсен кашни организацийĕн те хальхинчен вунă хут тимлĕнрех çавăрăнса пăхмалла».

Халăхăн пурнăçпа йăла условийĕсем çине пирĕн партипе государство яланах тимлĕн çавăрăнса пăхнă.

Вăрçă йывăрлăхсемпе çыхăнса тăнине, тăшмана çĕнтерессишĕн пирĕн çухатусем тÿсме лекнине совет çыннисем лайăх пĕлсе тăраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ ĕççыннисене вăрçă йывăрлăхĕсене тÿссе ирттерме çăмăлрах пултăр тесен, партипе совет тата профсоюз организацийĕсен ответлăхне татах та ытларах ÿстермелле.

Партипе хуçалăх тата профсоюз организацийĕсем вăрçă кунĕсенче ĕççыннисен пурнăçпа йăла ыйтăвĕсемпе ытларах ĕçлеме тытăнчĕç, вĕсем çак енĕпе паллă ĕçсем турĕç. Правительство йышăннă тăрăх пысăк заводсенче, чугунçулсем çинче рабочисене снабжени парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсем туни рабочисемпе служащисене снабжени парас ĕçе лайăхлатма нумай пулăшрĕ.

Куславкка комбиначĕн подсобнăй хуçалăхĕ выльăх-чĕрлĕхсен йышне икĕ хут ÿстернĕ, акмалли çĕр лаптăкне сарнă. Пĕрле апатланнă çĕре подсобнăй хуçалăх çĕрулмипе пахча-çимĕçсем парса тăрать. Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводăн подсобнăй хуçалăхĕ кăçал 1942 çулхинчен виçĕ хут ытларах çĕр акса хăварнă. Выльăх-чĕрлĕхсен йышне те кунта виçĕ хута яхăн ÿстернĕ. Рабочисене апатлантарнă çĕре подсобнăй хуçалăх 500 тонна çĕрулми, 300 тонна пахча-çимĕçсем парать. Ытти нумай предприятисен подсобнăй хуçалăхĕсем те сахал мар çитĕнÿсем тунă.

Рабочисемпе служащисен 50 пин çемьине яхăн кăçалхи çул хăйсем тĕллĕн пахча-çимĕçсем лартса хăварнă, пĕлтĕр хăрпăрхăй тĕллĕн пахча-çимĕçсем 19.300 çемье кăна лартнă пулнă.

Çапах та ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас ĕçре пирĕн тумаллисем нумай-ха. Килти вак-тĕвек япаласем, тумтирсемпе атă пушмаксем юсамалли мастерскойсем пачах та çителĕксĕр. Ку енĕпе вырăнти тата коопераци промышленноçĕ уйрăмах начар ĕçлет.

Ĕççыннисен пурнăçпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе пирĕн предприятисем çителĕксĕр ĕçленин тĕп сăлтавĕсем—советпа профсоюз, партипе хуçалăх органĕсем çак ĕçри çитменлĕхсем çине сахал çавăрăнса пăхнинче пулса тăраççĕ. Мастерскойсене час-часах кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ, чи кирлĕ оборудованисемпе инструментсем, материалсем уйăрса памаççĕ. Кадрсене суйласа илессине начар организациленĕ. Ĕççыннисен йăла условийĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисене час-часах шанчăксăр çынсем сăрхăнса кĕреççĕ.

Пирĕн хуласемпе район центрĕсенче ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатмалли пысăк майсем пур. Парти горкомĕсемпе райкомĕсен çак питех те кирлĕ ĕçе организацилес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлес пулать.

Промышленность предприятийĕсенчи парторганизацисем юлашки вăхăтра лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç, производствăна шăларах кĕме пуçларĕç, партиллĕ-политикăллă ĕçе аванрах йĕркелерĕç. Коммунистсем хăйсен примерĕпе массăсене производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантараççĕ.

Хĕрлĕ ялавлă завод коллективĕ ăнăçусем туни чылай енчен парторганизаци лайăх ĕçленин результачĕ пулса тăрать. Парторганизаци кунта массăсене заданисене пурнăçа кĕртме, йывăрлăхсене çĕнтерме мобилизацилесе пырать.

Партбюро уйăхра икĕ хутчен цехсенчи парторганизаци секретарĕсен канашлăвĕсене ирттерет. Çав канашлусенче партиллĕ ĕçĕн, социализмлă ăмăртăвăн, агитациллĕ ĕçĕн ыйтăвĕсене тата ыттисене те тĕплĕн сÿтсе яваççĕ. Партбюро членĕсем цехсенчи парторганизаци секретарĕсене вырăнта, ĕçленĕ çĕрте, тÿрремĕнех пулăшаççĕ. Цехсемпе отделсенче тăтăшах производствăллă канашлусем пулса иртеççĕ. Çав канашлусенче çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăлараççĕ, вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе практикăллă мерăсене палăртаççĕ. Партбюро çамрăк рабочисене вĕрентсе воспитани парас ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхать. Пĕр-пĕрин опычĕпе паллаштарас шутпа пĕтĕм заводри стахановецсен канашлăвĕсем тăтăшах пулса иртеççĕ. Малта пыракансен опытне заводри пичетре тĕплĕн çутатса пыраççĕ.

Парторганизаци агитациллĕ-массăллă ĕçĕн пур тĕрлĕ формисемпе те усă курать. Парторганизацин усă пухăвĕсем, политика темисем тăрăх докладсемпе лекцисем, калаçусем пулса иртеççĕ, рабочисене хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Художествăллă пултарулăх ĕçне анлăн сарса янă, нагляднăй агитацин пур майĕсем те (лозунгсем, плакатсем, хисеп хăмисем, кăтарту хăмисем) хăйсен тивĕçлĕ вырăнĕсене йышăннă.

Производствăллă ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри, Канашри вагонсем юсакан заводри парторганизацисем чылай пуçаруллăн ĕçлеççĕ. Вагонсем юсакан заводри парторганизаци социализмлă ăмăртăва сарса ярас тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем турĕ. Ăмăртăва мĕнпур коллектива: цехсепе сменăсене, бригадăсемпе уйрăм рабочисене явăçтарнă. Парторганизаци ăмăрту результачĕсене пуриншĕн те курăнмалла тăвас, пĕр-пĕрин ĕçне танлаштарса кăтартас меслетсемпе анлăн усă курать. Заводра кăтарту хăми тунă, унта чи лайăх рабочисемпе производство командирĕсен ячĕсене кунсеренех çырса пыраççĕ. Кунсăр пуçне, пур цехсенче те кăтарту хăмисем, хисеп хăмисем, куçса çÿрекен хĕрлĕ ялавсем пур. Производствăна нумаях пулмасть кĕнĕ çамрăк рабочисен результачĕсене уйрăммăн кăтартса параççĕ. Кашни уйăхăн пĕрремĕш числисенче жюри цехсемпе комплекссен, бригадăсен ĕç итогĕсене пĕтĕçтерсе, малта пыракансене куçса çÿрекен хĕрлĕ ялавсем парать. Ăмăртăва вăйлантарас тĕлĕшпе политикăллă-массăллă ĕç пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăрать. Агитаторсем калаçусем ирттернипе, хаçатсем вуласа панипе кăна чарăнса тăмаççĕ. Вĕсем чи лайăх стахановецсен опычĕсене анлăн сараççĕ, кая юлакансене питлеççĕ, кая юлнин сăлтавĕсене тăрă шыв çине кăлараççĕ. Партбюро агитаторсен ĕçне куллен ертсе пырать.

Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем, уйрăмах транспортра, халĕ те çителĕксĕр ĕçлесе пыраççĕ-ха. Вĕсем предприяти ĕçĕшĕн хăйсен ответлăхĕ ÿснине ăнланса илмен, производство ыйтăвĕсемпе кирлĕ пек интересленмеççĕ, парти горкомĕсемпе райкомĕсем вара вĕсене ĕçре çителĕксĕр пулăшаççĕ.

Куславкка комбинатĕнчи парторганизаци хăйĕн пухăвĕсенче уйăхран уйăхах пĕр ыйту—«черетлĕ уйăхри ĕç çинчен директорăн информацине итлесси» ыйтăва лартса пырать. Çав вăхăтрах, комбинатра ытти çивчĕ ыйтусем нумай. Вĕсен умĕнчен ниепле те ахаль иртсе кайма çук. Кунта ĕç дисциплини япăх, рабочисен пурнăçпа йăла ыйтăвĕсем çине, çамрăксем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелесси çине сахал çавăрăнса пăхаççĕ. Кун йĕркинчен парти ĕçĕн нумай ыйтăвĕсем тухса ÿкнĕ. Парторганизаци хăй йышăннă решенисем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслес ыйтусене те кун йĕркине лартмасть.

Производство программине пурнăçа кĕртессишĕн Канаш деповĕнчи парторганизаци çителĕксĕр кĕрешет. Сăмахран, депора топливо ытлашши нумай çунтарса пĕтернĕ. Çак ĕçе тунă çынсем хушшинче коммунистсем те пур. Хăшпĕр коммунистсем ĕçре брак тăваççĕ. Партбюро çав фактсене курмасăр иртсе каять. Депори партбюро партиллĕ-политикăллă ĕçе япăхтарса янă, партире тăман активпа çителĕксĕр ĕçлет, мĕнпур рабочисем хушшинче ĕçлессине йĕркелемен, рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн, вĕсене производствăпа техника тĕлĕшĕнчен вĕрентессишĕн, политика енĕпе ÿстерессишĕн сахал тăрăшать.

Парторганизацисен питех те кирлĕ задачи—парти ретне çĕнĕ членсем илесси пулса тăрать. Парти организацийĕсен массăсем хушшинче тăтăшах ĕçлесе пымалла, лайăх çынсене вăхăтра палăртса, суйласа илмелле, вĕсене ĕçре пулăшмалла, политика тĕлĕшĕнчен ÿсме пулăшмалла, вĕсене большевикла парти ретне явăçтармалла. Парти ретне хăйсем çине йывăр ĕçсем илессинчен хăраман, кирек мĕнле йывăрлăха та тÿссе ирттерме хатĕр тăракан, фашизма çапса аркатас ĕçе мĕнпур вăя, хăйсен пурнăçне те пама хатĕр тăракан çынсен шутĕнчен ÿстерсе пымалла.

Пĕтĕмĕшпе илсен, Чăваш республикинчи парторганизаци ретĕ чылай ÿсрĕ. Анчах парти ретне илнисем хушшинче рабочисем сахалли пысăк çитменлĕх пулса тăрать.

Парторганизаци рабочисен коллективĕн чунĕпе чĕри пулса тăма тивĕçлĕ. Парти руководителĕн ĕççыннисем хушшинчи политикăллă ĕçе, пĕр вак-тĕвек юлмиччен, шала тарăнăн кĕмелле. «Хуçалăх ĕçĕнчи çитĕнÿсем, вĕсем çирĕп те нумай вăхăтлăха пуласси пĕтĕмĕшпех партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçĕн ăнăçлăхĕсенчен килеççĕ... çак условисĕр хуçалăх ĕçĕнчи çитĕнÿсем хăйăр çинче туса лартнă çитĕнÿсем пулса юлма пултараççĕ», тесе кăтартса панă Сталин юлташ. Вăрçă условийĕсенче Сталин юлташăн çав кăтартăвĕ уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Партин хуласемпе районсенчи комитечĕсен заводсемпе транспортри пуçламĕш парторганизацисене ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла.

Парти организацийĕсен комсомол пурнăçĕн ыйтăвĕсемпе тăтăшах интересленмелле. Предприятисене çамрăк резервсем кĕреççĕ, çамрăксем производствăра пысăк вăй пулса тăчĕç. Парти организацийĕсен комсомола çамрăксене воспитани парас ĕçре пулăшас пулать. Комсомол организацийĕсене предприятисен производствăллă тата обществăллă пурнăçне татах та активлăнрах явăçтармалла. Çамрăк рабочисем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе гĕпренех лайăхлатас пулать.

Сталин юлташăн «Совет халăхĕн отечественнăй Аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине халăх хушшинче сарас ĕç çине парторганизацисен уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Совет халăхĕн отечественнăй аслă вăрçăри задачисем çинчен Сталин юлташ кăтартса панисене ĕççыннисене куллен, тĕплĕн ăнлантарса пымалла.

* * *

Геройла Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем совет çыннисен чĕрисене хавасланăхпа савăнăç кÿреççĕ. Çакăнпа пĕрлех совет халăхĕ çакна лайăх ăнланать: нимĕç оккупанчĕсене пуçĕпех çапса аркатас тесен, халĕ пирĕн нумай вăй хумалла тата çухатусем тÿсмелле пулать-ха. Тылри кашни боецăн фронт умĕнчи хăйĕн ответлăхне туйса илмелле, тăван çĕршывпа фронт панă заданисене татах та ăнăçлăнрах пурнăçа кĕртсе пырас тесе мĕнпур вăйсене мобилизацилемелле.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва татах та анлăрах сарар. Социализмлă ăмăртăвăн ялавĕсем çинче çак сăмахсем ялкăшса тăраççĕ:

— Мĕнпур вăя—фронта пулăшнă çĕре!

— Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!

Ют çĕршывсенче

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германин Швейнфурт хулине тата Регенсбург хулинчи авиаци заводне тапăннă. Бомбăсем пăрахасси ăнăçлăн пулса иртнĕ. Фотографи ÿкерчĕкĕсем кăтартнă тăрăх, Регенсбургри «Мессершмитт» авиаци заводне пысăк сиен кÿнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 33 истребительне персе ÿкернĕ. Çав операцисенчен 41 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Çав кунах союзниксен авиацийĕ нимĕçсен Францири аэродромĕсене чылайĕшне тапăннă.

Акăлчансен авиацийĕ Берлинри çар объекчĕсем çине пырса бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: августăн 18-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ тăшманăн Кăнтăр Италири çулйĕрĕсене атакăланă, çавăн пекех тата Занте гаваньне Грецин хĕвеланăç çыранĕнчи ытти пунктсене те атакăланă.

СОЮЗНИКСЕМ БУДАПЕШТ ХУЛИНЧИ ХАЛĂХА СИСТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: союзниксен самолечĕсем Винер-Нейштадт хулинчи объектсем çине бомбăсем пăрахма вĕçсе кайнă чухне Будапешт хули тĕлне çитсен листовкăсем пăрахнă. Листовкăсенче çапла каласа çырнă: Будапешт хули тавра Германи валли ĕçлекен пысăк çар заводĕсем нумайăн вырнаçса ларнă. Çавăнпа та Будапешт çине кирек хăш самантра та союзниксен самолечĕсем пырса бомбăсем тăкма пултараççĕ, тенĕ.

«Сирĕн правительствăр, — тенĕ листовкăсенче малалла,—Венгрирен Германи арсеналĕ туса хучĕ. Венгерец халăхĕ иккĕрен пĕрне суйласа илмелле: е унăн нимĕçсене Венгри çĕршывне нимĕçсен çар бази тума чарса лартмалла, е малашне йывăр ишĕлÿсем пуласшне килĕшмелле», тенĕ.

СИЦИЛИРИ ÇАПĂÇУСЕНЧИ ÇУХАТУСЕМ

ЛОНДОН, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: туллимар даннăйсем тăрăх, Сицили утравĕ çинче пулса иртнĕ çапăçусем вăхăтĕнче августăн 10-мĕш числиччен союзниксен çарĕнче 25.000 çынна яхăн пĕтнĕ. Вăл шута вилнисем, аманнисем, пĕр хыпарсăр çухалнисем тата тыткăна лекнисем те кĕреççĕ. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксем Сицили утравĕ çинче 135.000 çын тыткăна илнĕ; унсăр пуçне, тăшманăн сахалтан та 32.000 çын вилнĕ е аманнă. Союзниксем 260 танк тата 502 тупă пĕтерсе тăкнă е тытса илнĕ. Çапăçусем пуçланнăранпа августăн 12-мĕш числиччен 1.013 самолет персе ÿкернĕ е çĕр çинче тытса илнĕ.

Агентствăн тепĕр пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Мессина хули пĕтĕмпех ишĕлсе пĕтнĕ. Мессинăра пурăнакан çынсем каланă тăрăх, нимĕçсем, каялла чакма тытăнсан, мĕн ярса илме пултарнă, çавна йăлтах хăйсемпе турттарса кайнă. Вĕсем итальянецсене хĕçпăшалсăрлантарнă та вĕсен пĕтĕм пурлăхне туртса илнĕ.

ИДЕНПА КАДОГАН КВЕБЕКА ПЫНА

ЛОНДОН, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Квебекри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян унта Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Иденпа ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн яланхи заместителĕ Кадоган çитнĕ.

Италири лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Бернри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Италирен çитнĕ хыпарсем тăрăх Генуяра портра ĕçлекен рабочисем забастовка пуçласа янă. Вĕсем вăрçа пĕтерсе лартса мир тума ыйтаççĕ. Забастовка тăвакан рабочисемпе портри полици хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 16-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

ЛЕРМОНТОВ

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

ПРИНЦ И НИЩИЙ

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.

НТ 1104